26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
МАРТ
27
ШАМАТКУН
67(6304) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Йывăç юхтарас ĕçе кăтартуллăн ирттерер

Партипе совет тата вăрман хатĕрлекен организацисем умĕнче халăх хуçалăхĕнчи пысăк та ответлă задача—йывăç юхтарас ĕçе тимлĕн хатĕрленсе ирттерес задача тăрать. Çак ĕçе ăнăçлăн туса пирĕн республикăри промышленноç предприятийĕсене заводсене чăптавар та топливо йĕркеллĕн парса тăрасси, заводсемпе предприятисем йĕркеллĕ ĕçлесси килет.

Йывăç юхтарас ĕçсен вăхăчĕ кунсеренех çывхарса килет. Вăрман хатĕрлекен организацисен тата вĕсене ĕçпе туртăм вăйĕ парса тăракан районсемпе колхозсен, юлнă вăхăтри кашни сехетне туллин усă курса, юхтармалли мĕнпур йывăçа, вутăна сулăсене туса çырана турттарса тухмалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ, хатĕрленĕ ĕçсене хăвăртрах туса çитерес шутпа, йывăç юхтарас тĕлĕшпе ĕçлекен предприятисен директорĕсене вăрманта ĕçлеме мобилизациленĕ çынсемпе лашасен пĕр пайне йывăç сулăсене туса çĕре турттарса тухма куçарма ирĕк панă.

Хĕлле сулă тăвас тĕлĕшпе Атăл хĕрринчи леспромхоз ĕçлет. Унта сулă тăвасси йывăç турттарассинчен чылай юлса пырать. Паянхи кун тĕлне турттарнă йывăçăн çуррине çеç сулăсем тунă.

ЧАССР Наркомлесĕн апрелĕн 5-мĕшĕ тĕлне йывăç турттарас ĕçе валли 25 лодка, 2.000 пакур хатĕрлемелле. Вĕсене ĕç вырăнĕсене турттарса тухмалла. ЧАССР Вăрман Халăх Комиссарĕ Дубов юлташ пĕлтернĕ тăрăх, паянхи кун тĕлне пакурсене пĕтĕмпех хатĕрлесе çитернĕ. Кунсăр пуçне 16 лодка хатĕрленĕ, анчах вĕсен пĕр пайне çеç çĕклемелли вырăнпа турттарса тухнă.

Йывăç юхтарас ĕçĕн ăнăçлăхĕ ĕç тата туртăм вăйĕ çителĕклĕ парса тăни, вĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухни, тухăçлăн ĕçлени, ĕç вăхăтĕн кашни сехетне туллин усă курни, ĕçлекенсене техникăллă пулăшу пани тата ытти пирки парать. Йывăç юхтаракан предприятисене ĕçпе туртăм вăйĕ парса тăракан районсен руководителĕсен йывăç çак вăйĕ мобилизацилесе кăтартуллăн туса ирттермелле.

Йывăç юхтарас ĕç кунĕн-çĕрĕн, пĕр чарăнмасăр пулса иртмелле. Çавăнпа йывăç юхтарас ĕçе мобилизациленĕ çынсен хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплетмелле. Йывăç юхтарма мобилизациленĕ пĕр çын та хăйĕн ĕçрен пăрăнни ан пултăр. Кулна пĕрле йывăç турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен предприятисемпе районсен руководителĕсем ĕçлекенсене лайăх ĕç условийĕсем туса пама тивĕç. Леспромторгсен столовăйĕсене лайăхлатмалла. ЧАССР Наркомлесĕн тата йывăç юхтарас тĕлĕшпе ĕçлекен вырăнти предприятисен ĕçлекенсене пусланнине çитермелле, вĕсене санитари тĕлĕшĕнчен тасатса тухмалла.

ВКП(б) Улатăр тата Шупашкар горкомĕсен, Улатăр, Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Сĕнтĕр районкомĕсен йывăç юхтарас тĕлĕшпе ĕçлекенсем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе йĕркеллĕн туса пымалла. Çавна май йывăç юхтарас кампание ăнăçлăн ирттерессишĕн ĕçлекенсен хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса ямалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йывăç юхтарас ĕçе хутшăнакан организацисен руководителĕсене ку ĕçе кăçал пĕлтĕрхи пек туса ирттермелле марри çинчен хытăн асăрхаттарчĕç. Пĕлтĕр ĕçе начар организациленĕ пирки тата ĕçе туртăм вăйĕ çителĕксĕр парса тăнă пирки, йывăç юхтаракан предприятисем хăйсем те çак ĕçе туртăм çителĕклĕ тумасăр пирки йывăç юхтарас ĕçе кăтартуллă сахал тухнă. Çавăн пирки юхтарнă мĕнпур йывăçа кирлĕ çĕре çитерейменни тата тăкăксем те пулнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ асăрхаттарнипе вăрман хатĕрлекен организацисен йывăç юхтарас ĕçе кăçал вăхăтра туса ирттермелле. Ĕçпе туртăм вăйĕ парса тăракан районсен руководителĕсен хăйсене панă задачăсене туллин туса пырас пулать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Мартăн 24-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсем ларса пыракан тата грузсем тиенĕ 50 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕтсе янă, тăшманăн полевой тата зенитнăй артиллерин 8 батарейине пусарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр чаçăн боецĕсем тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ опорнăй пунктне хупăрласа илнĕ, нимĕç гарнизонне тылран атакăланă та кĕске çапăçу хыççăн çав пункта йышăнса илнĕ. Боеприпассен складне, 3 оруди, винтовкăсем, гранатăсем тата патронсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Белгород районĕнче пĕр чаçăн подразделенийĕсем шыв урлă каçма хăтланнă нимĕç автоматчикĕсен ротине аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 ытла вилли выртса юлнă. Артиллерирен персе тăнипе виçĕ танк, 5 противотанковăй оруди персе çĕмĕрнĕ, тăшман пехотин пĕр батальонне çити пĕтерсе тăкнă е сапаласа янă.

* * *

Чугуевран çурçĕререхре пирĕн чаçсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Ирхине нимĕç пехотин пĕр полкĕ 20 танк пулăшнипе пĕр высотана пырса тапăннă. Наступление артиллерирен тата йывăр минометсенчен персе пулăшса тăнă. Пирĕн боецсем, тăшман тапăнчăкне сирсе ярса, хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăнă. Нимĕçсен 7 танкне тата хăй тĕллĕн куçакан 5 туппине персе çунтарса янă. Нимĕçсем тепĕр участокра тапăнма хăтланни те ăнăçлă пулман. Совет артиллерийĕ вăйлăн персе тăнипе, çапăçу хирĕнче 200 ытла вилĕ хăварса, гитлеровецсем васкаса каялла чакнă.

* * *

Харьков облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ халăх пурăнакан пысăк пункта пырса тапăннă та унта пулнă нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. 80 гитлеровеца вĕлернĕ. Нимĕçсем персе пăрахмалла тунă 20 совет гражданне ирĕке кăларнă. Кунсăр пуçне партизансем тăшманăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Ишĕлсе пĕтнĕ вагонсем айĕнче фашистла нимĕç захватчиксем темиçе вуншар çын пĕтнĕ.

* * *

«Адольф Гитлер» ятлă СС дивизин пĕрремĕш полкĕнчи 11-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Август Зуэр çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи Франципе тăратчĕ. Иртнĕ çулхи ноябрьте дивизие Çурçĕр Африкăна куçарма хатĕрлеме пуçларĕç. Пурне те медицина комиссийĕ урлă тĕрĕслерĕç. Африкăра çар службине тума юрăхсăр пулнисене пурне те ытти чаçсене ямалла пулать тетчĕç. Анчах кĕтмен çĕртен дивизие Российăна ярасси çинчен приказ çитрĕ. Январĕн çурринче дивизи подразделенийĕсене хĕвелтухăç фронтне куçарма пуçларĕç. Хулари салтаксемшĕн нимĕç войскисем Российăра йывăр поражени сем тӳсни тата фельдмаршал Паулюс армийĕ пĕтни паллă пулчĕ. Салтаксем çапла калатчĕç: «Нимĕç войскисем тата тепĕр çакăн пек поражение лекес пулсан, темиçе çул хушшинче çавтерк пысăк жертвăсем тӳссе тунисене Германи пĕтĕмпех çухатать», тетчĕç. Нумай офицерсемпе салтаксем шутланă тăрăх, Францирен çапăçма пултаракан чи лайăх дивизисене куçарма пуçлани питĕ пысăк хăрушлăхпа çыхăнса тăрать».

* * *

Аялгарахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тыткăна лекнĕ совет çыннисене тискеррĕн асаплантарни çинчен калакан акта пичетлетпĕр: «Нимĕçсенчен тасатнă Курск облаçĕнчи Зорино ялĕнче совет боецĕсен 32 виллине тупнă. Çакă паллă пулнă: вĕсене, çапăçу хирĕнче аманнăскерсене, гитлеровецсем тыткăна илнĕ те тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Икĕ красноармеецăнне куçĕсене чиксе шăтарнă, тепринне питне аркатса пĕтернĕ. Виçĕ вилле çунтарса янă. 3-мĕш рангри военврач Заливакинăна тата санитарка Мария Федоровăна бандитсем пуçĕсене çапса çурнă». Акт çине çаксем алă пуснă: старши лейтенант Толмасов, красноармеец Суханов, колхозниксем Фетисов тата Мелихова.

* * *

Югославин Загреб-Сплит чугун çул районĕнче кĕрешекен партизанĕсем нимĕç хуралне сапаласа ярса, çак лини çинчи чи пысăк Бендер виадукне сирпĕтсе янă. Поездсене çӳремелле тумашкăн унта темиçе уйăх вăхăт кирлĕ пулать. Невесино хирĕнче партизансем оккупантсен колоннине аркатса тăкнă. Тăшманăн 200 ытла салтакпа офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Çакăн пек трофейăсем: 3 йывăр миномет, 11 пулемет, çар грузĕсем тиенĕ 100 лава тытса илнĕ.

Пирĕн землякслем

Гвардеец Захар Дмитриев

Гварди старши лейтенанчĕ Дмитриев Захар Дмитриевич Октябрьски районри Ĕмпĕрт Туçа ялĕнче çуралса ӳснĕ. 1941 çулхи октябрь уйăхĕччен Шăхасан районĕнчи çĕрĕç пайĕнче главнăй агроном пулса ĕçленĕ.

Хĕрлĕ Çар ретне кайсан малтанхи кунсенче Захар Дмитриев мĕнпур вăйне çар техникине тĕплĕн вĕренсе çитесси çине хунă.

Тăван çĕршыв Захар Дмитриев аллине хăватлă хĕçпăшал шанса панă. Ăна Дмитриев юратса вĕренсе алла илнĕ, çав машина ăна савнă ывăлĕ пекех итлекен пулнă.

1942 çулхи март уйăхĕнче, шывшурсем юхма тапраннă вăхăтра, Захар Дмитриева Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтне яраççĕ. Вăл çирĕп дисциплинăллă пулнине тата пултаруллă организатор пулнине кура, ăна гвардейски полкри парти организацин секретарьне суйлаççĕ. Хăй ĕçне Дмитриев юратса туса пырать. Хĕрӳллĕ çапăçусем вăхăтĕнче вăл боецсем хушшинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

1942 çулхи июль уйăхĕн кунĕсем Захар Дмитриевшăн нихăçан асран тухмалла мар вăхăтсем пулса юлаççĕ.

Ун чухне шăрăх кунсем тăнă. Хĕвел хытă пĕçертсе пăхнă.

Пĕр кунхине Дмитриев ертсе пыракан подразделени хăйсен командованийĕнчен приказ илнĕ:

«В. ятлă халăх пурăнакан пункт патĕнче хупăрласа илнĕ фашистсене çĕмĕрсе тăкмалла».

Çапăçу çав тери хĕрсе кайнă. Вилĕм умне çитсе тăнă фашистсем калама çук тискеррĕн те сĕмсĕррĕн хирĕç тăнă. Хăшпĕр вырăнсенче тата час-часах контрнаступление куçнă. Дмитриевсем хĕçпăшала питех те меллĕ вырăна, Л. ятлă юханшыв хĕррине вырнаçтарса лартнă та, тăшмансем çине аça-çиçĕмле вут тăкнă.

Çапла виçĕ кун хушши пĕр минута канмасăр хаяр та юнлă çапăçу пынă. Виççĕмĕш кунне Захар Дмитриевсем умне инкек сиксе тухнă. Вĕсен боеприпассем пĕтсе пынă. Мĕн тумалла? Дмитриев телефон патне чупса пынă, анчах телефон ĕçлемен. Дмитриев вара часрах Васильевпа Коваленко связистсене чĕннĕ те, вĕсене провод тăрăх тĕрĕслеме янă. Лешсем линейнăй сумка, пĕр телефон аппарачĕ тата запаслăх кабель илнĕ те, приказа пурнăçлама чупнă. Çав вăхăтра Дмитриевсем, хăйсен снарячĕсене перекетлесе хăварас тесе, тăшмансем çине сайрарах вут тăкма пуçланă. Тăшман ăна часах сиснĕ, хăюллăнрах тапăнса пыма пуçланă.

Нимĕçсем çывхарсах килнĕ, Дмитриев вĕсем çине вут тăкма приказ панă. Нимĕçсем выртнă.

Сасартăк, инçех те мар, вĕсем патне такам шуса пыни курăннă. Ку хайхи телефон провочĕ тăрăх кайнă Коваленко пулнă, унăн гимнастерки çине хĕрлĕ юн сăрхăнса тухнă. Дмитриев часрах ун патне чупса пынă.

— Мĕн пулнă? — ыйтнă вăл хыпăнса.

— Амантăм... Васильев йывăр аманчĕ...

— Провод ăçта татăлнине тупрăр-и?

— Çитеймерĕмĕр.

Дмитриев çамки çине тар персе тухнă. Çавăнтах вăл Коваленкона хулпуççийĕнчен пырса тытнă.

— Итле-ха, Коваленко, вилсен те, çапăçса вилер. Çапла-и?... Кайха боепитани начальникĕ патне: Хыпаланас пулать тата...

Коваленко каллех провод тăрăх кайнă.

Лару-тăру çав тери çивĕчленсе çитнĕ.

Дмитриевсем йăвашрах вут сапса тăнипе усă курса, тăшман пирĕн пехотинецсене хĕснĕçемĕн хĕссе киле пуçланă. Çапла çур сехет иртнĕ. Дмитриев каялла çавăрăнса пăхнă. Инçех те мар, çырма пуçĕнчен автомашина хăпарни курăннă. Акă, снарядсем çитрĕç! Дмитриев пĕчĕк ача пек хĕпĕртесе ӳкнĕ...

Тепĕр вунă минутăран вара вĕсем тăшман çине татти-сыпписĕр вут тăкма пуçланă.

Сасартăк, пĕтĕм хир тăрăх «урра» кăшкăрни çил-тăвăллăн янраса кайнă. Вăл тăвăл ӳснĕçемĕн ӳссе пынă. Пирĕн пехотинецсем атакăна кĕрсе кайнă.

Тăшман арпашса кайнă, каялла тарма пуçланă. Часах пирĕннисем В. пунктне те çĕмĕрсе кĕнĕ.

Çапăçу иртсен Дмитриевсем патне икĕ мĕлке ерипен пынă. Патне çитсен Дмитриев вĕсене палланă: Коваленко связист йывăр аманнă Васильева йăтса пынă, вĕсем иккĕшĕ те чĕп-чĕрĕ юнпа вараланса пĕтнĕ.

— Сирĕн приказа пурнăçларăм,— аран сăмах чĕннĕ Коваленко.

— Молодец, герой! — чуптуса илнĕ ăна Дмитриев, унăн питçăмартийĕ тăрăх савăнăç куççулĕ юхса аннă.

Çак операцие ăнăçлăн пурнăçланăшăн Дмитриев юлташ Совет Союз Геройĕнчен,— полковник Шутăвран виçĕ хутчен благодарность илнĕ. Виçĕ кун хушши пынă çапăçура Дмитриевсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене чылай вĕлерсе е амантса пĕтернĕ.

Çакăн хыççăн командовани Дмитриев юлташа гвардейски значок парса наградăланă, ăна татах та ответлăрах ĕçсене хушма пуçланă.

Халĕ Дмитриев юлташа правительство наградине пама тăратнă.

Степан Аслан, Василий Веселов.

Нимĕç фашисчĕсене пĕтерме

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕн хулисемпе ялĕсене ирĕке кăларассишĕн паттăррăн кĕрешет. Совет Союзĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем танксем, самолетсем тума хăйсен перекетленĕ укçисемпе тыррисене параççĕ.

Эпир, халлĕхе инçетри тылра пурăнакан чăваш боецĕсем, хамăра паракан укçаран боевой самолетсем тунă çĕре уйăрса пама йышăнтăмăр. Эпĕ танксемпе самолетсем тума 250 тенкĕ тата нимĕç фашисчĕсенчен хăтарнă ялсемпе хуласенчи тăлăх ачасене пулăшма 50 тенкĕ паратăм. Çавăн пекех пирĕн чаçри чăваш ачисенчен Е. Иванов 200 тенкĕ, Н. Федоров 200 тенкĕ пачĕç. Эпĕ кунпа çеç чарăнса тăмастăп. Çитес уйăхра тухакан ĕç укçине пĕтĕмĕшпех танксен колоннисене тунă çĕре паратăп.

Кунсăр пуçне эпир çапăçури боецсен ретне тăма яланах хатĕр пулас тесе хĕçпăшала тĕплĕн вĕренетпĕр.

М. Владимиров.

ТИРАЖ ПУЛСА ИРТНĔ

Мартăн 25-мĕшĕнче Мускавра Виççĕмĕш Пятилетка заемĕн (тăватăмĕш çулхи кăларăмĕн) черетлĕ тиражĕ пулса иртнĕ.

Тиражра заемăн выляса илмелли кăларăмĕ тăрăх 131.222 пин тенкĕлĕх 840.000 выигрыш вылянннă.

3.000 тенкĕлĕх выигрыш 106.640 номерлĕ серин 06-мĕш номерлĕ облигацийĕ çине тухнă.

Çак заемăн тепĕр тиражĕ 1943 çулхи июнĕн 25-мĕшĕнче пулса иртет. (ТАСС).

Совет Союзĕпе Япония пулă тытас тĕлĕшпе тунă конвенцие 1943 çула тăсакан протокол çине алă пусни çинчен

Кăçалхи мартăн 25-мĕшĕнче Куйбышев хулинче, пĕр енчен—Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ С. А. Лозовский юлташ, тепĕр енчен—Японин СССР-ти посолĕ Н. Сато господин, пĕр-пĕринпе калаçнă хыççăн, пулă тытас тĕлĕшпе 1928 çулта тунă конвенцие 1943 çула тăсакан протокол çине алă пуснă тата ун пирки пĕр-пĕрин патне нотăсем янă.

Пулă тытас тĕлĕшпе 1928 çулта тунă конвенцин срокĕ 1936 çулхи май уйăхĕнче тухнă. Çавăн хыççăн, пулă тытасси çинчен çĕнĕ конвенци туман пирки, 1928 çулхи конвенцие, СССР-пе Япони Правительствисем килĕшнĕ тăрăх, кашнинчех пĕрер çула тăсса пынă. Çапла вара 1928 çулхи конвенцие 1936 çул вĕçне çити тăснă, çавăн хыççăн кашни çулах вăл конвенцие 1937-мĕш, 1938-мĕш, 1939-мĕш, 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш çулсене тăсса пынă.

Кăçалхи мартăн 25-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Японин алă пуснă протокол тăрăх тата вĕсем пĕр-пĕрин патне янă нотăсем тăрăх пĕлтĕрхи килĕшĕвĕн условийĕсем 1943 çулта та çаплипех юлаççĕ. Уйрăмлăх кăçал çакăнта пулать: Япони промышленникĕсем тара илнĕшĕн укçана ылттăнпа тӳленĕ чухне пĕлтĕрхи килĕшӳре кăтартнă 4 процент вырăнне кăçал 5 процент хушса тӳлĕççĕ.

ЯЛСОВЕТ ИСПОЛКОМĔСЕН ПРЕДСЕДАТЕЛĔСЕН РЕСПУБЛИКĂРИ КАНАШЛĂВĔ

Ĕнер, мартăн 26-мĕшĕнче, Шупашкарта ялсовет исполкомĕсен председателĕсен республикăри канашлăвĕ уçăлчĕ.

Канашлăва кĕске умсăмах каласа ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ уçрĕ.

— Ялсовет исполкомĕсен председателĕсен республикăри канашлăвĕ совет государстви отечественнăй асăлă вăрçăра нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă вăхăтра пухăнчĕ, — тет Андреева юлташ. Совет государстви хаяр тĕрĕслӳ вăхăтĕнче хăйĕн çирĕп тытăмне татах та ытларах тĕреклетрĕ. Халăх дисциплинăллăрах пулса пĕтĕм ĕçе патриотизмла пысăк çĕкленӳпе туса пырать. Совет государствин вăйĕпе тĕрекĕ халăх пĕтĕм вăйпа тăрăшнинчен тухса тăрать. Ĕççынни депутачĕсен вырăнти совечĕсем ĕçе организацилесе ертсе пынипе пирĕн колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем çĕршыв лартнă задачăсене пурне те ăнăçлăн пурнăçласа параççĕ.

Канашлура ялсовет исполкомĕсен председателĕсем хăйсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсем çинчен каласа парĕç, умра тăракан задачăсене палăртса, пур çитменлĕхсене пĕтерме çĕнĕрен вăйлăн мобилизациленĕç, — терĕ Андреева юлташ.

Канашлу хăйĕн президиумне 55 çынран суйларĕ. Президиумра — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ, Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Андреева, ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ЦК ВКП(б) çумĕнчи парти контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Серов, ЧАССР Шалти ĕçсен халăх комиссарĕ Белолипецкий юлташсем, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсемпе Совнарком председателĕн заместителĕсем тата малта пыракан ялсовет исполкомĕсен председателĕсем.

Канашлăва пухăннисем тăваллăн алă çупса Сталин юлташа тата вăл ертсе пыракан ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюро составне хисеплĕ президиума суйларĕç.

Канашлăвăн кун йĕркинче пĕр ыйту — Çуракине хатĕрленесси çинчен. Çак ыйту тăрăх канашлу ЧАССР Совнарком председателĕн А. М. Матвеев юлташăн докладне итлерĕ.

Доклад итленĕ хыççăн канашлăвăн пĕрремĕш ларăвĕ вĕçленчĕ. Пысăк концерт пулчĕ.

Хулари тасалăхшăн

Çуркунне çывхарнă май хулана хĕллехи тасамарлăхран пĕтĕмпех тасатса çитерес ĕç — питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать. Вăл хулари халăх хушшинче тĕрлĕ чир-чĕр сараласинчен сыхланма пулăшать. Чăваш АССР Совнаркомĕ мартăн 15-мĕшĕнче республикăри хуласемпе халăх пурăнакан пунктсене тасатасси çинчен уйрăм постановлени кăларнăччĕ. Мартăн 24-мĕшĕнче Совнарком Шупашкар хулине тасатас пирки ятарласа постановлени кăларчĕ.

Шупашкар хулинчи тасамарлăха тасатас тĕлĕшпе оперативлă ертсе пыма уйрăм комисси тунă. Вăл комиссие çак юлташсем кĕреççĕ: ЧАССР Сывлăха сыхлав Халăх комиссарĕ Лихачев юлташ (комисси председателĕ), Коммунальнăй Хуçалăх Халăх комиссарĕ Новиков юлташ, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ Никитин юлташ, Шупашкар гарнизонĕн начальникĕ полковник Макаров юлташ тата Шупашкар хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ.

Хулана тасатас ĕçе пĕтĕм ĕçхалăхĕ хутшăнмалла. Тасамарлăхсене хуларан турттарса кайма хулари транспорта тата предприятисемпе учрежденисен транспортне илсе усă курма ирĕк панă. Кунсăр пуçне çак ĕçре Шупашкарпа Ишлей районĕсенчи хула çывăхĕнчи колхозсен транспорчĕпе усă курма ирĕк панă.

Апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне, Совнарком йышăннă тăрăх, хулана пĕтĕмпех тасатса çитермелле. Совнаркомăн çав постановленине пурнăçа кĕртессине чăрмантаракан е ăна пурнăçлассинчен пăрăнма хăтланакан çынсене суда парса айăплама пултараççĕ.

Правительство йышăннă постановление пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлер. Чăваш республикин столицине санитари тĕлĕшпе кăтартуллă хула туса хурассишĕн тăрăшар.

Фронтовиксен çемьисене—пулăшу

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри чылай колхозсем фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕç çине пысăк тимлĕх хураççĕ. «Прогресс» колхозра (председателĕ фронтовик Гурий Ефимов юлташ) фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе кăçал чылай ĕçсем туса ирттернĕ.

Егор Иванов юлташ фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешет. Унăн килĕнче виçĕ ача. Вĕсем çамрăк пирки пĕри те колхозра ĕçлеймеççĕ. Колхоз ачасене пулăшу кирлине çийĕнчех асăрханă. Вĕсене 6 пăт тырă тата вутă, пĕр лав улăм парса пулăшнă. Çавнашкалах Петр Петраков юлташ та вăрçă пуçлансанах çĕршыва сыхлама фронта тухса кайнă. Унăн арăмĕ Евгения Леонтьева 5 ачапа колхоза юлнă. Вăл колхозра тăрăшса ĕçлет. Анчах та пиллĕк ачана пĕччен пăхма çăмăлах мар. Çавăнпа та ачасене пулăшу парас тесе, колхоз 5 кубометр вутă, 300 кĕлте, 6 пăт тырă панă.

Çĕршыв хăрушлăхра. Тăшман пирĕн çĕршывăн чечекленекен хулисем çинелле талпăннă. Çак тапхăрта Иван Слабов хăйĕн суккăр арăмне тата икĕ ачине колхоза хăварать те, фронта тухса каять. Халĕ вăл фронтра паттăррăн кĕрешет. Колхоз унăн çемьине пĕрмаях пулăшса тăрать. Унăн ачисене тата арăмне пăхса пурăнма колхоз пĕр çын уйăрнă. Вăл Слабовăн çемьине пăхса пурăнать. Халĕ колхоз красноармеец-фронтовикăн ачисене 10 кубометр вутă, тырă парса пулăшрĕ.

Кунашкал тĕслĕхсене «Красная Чувашия» колхозран та илсе кăтартма пулать. Кронит Лаврентьевич Лаврентьев иккĕмĕш çул ĕнтĕ отечественнăй вăрçă фронтĕнче çапăçать. Вăл хăй фронта кайсан, унăн арăмĕ вилет. Икĕ ачи: Леонид тата Зоя тăлăха юлаççĕ. Анчах та фронтовикăн икĕ ачине колхоз пăрахмасть. Вĕсене кашни уйăхрах çăнăх парса тăрать. Тăхăнмаллисем илсе парать.

Фронтовиксен çемьисене «Новая сила» колхоз (председателĕ коммунист Федор Семенов юлташ) 20 кубометр вутă, 9 пăт çăнăх, 9 пăт çĕрулми, 20 килограмм кĕрпе, 10 килограмм купăста, виçĕ килограмм сухан, икĕ килограмм çу, икĕ килограмм пыл парса пулăшнă.

Районра фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе «Янмурзино», «Красное Сормово», «Свобода» колхозсем лайăх ĕçлеççĕ.

МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлаççĕ

КАНАШ, мартăн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Хулари предприятисемпе артельсем Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ.

Апат-çимĕç комбиначĕ (управляющийĕ Захватова юлташ) мартăн 20-мĕшĕ тĕлне пĕрремĕш кварталти производство планне 144,4 процент, март уйăхĕнчи плана 120 процент тултарчĕ. Севастьяновăпа Васильева юлташсен бригадисем ăмăртура малта пыраççĕ.

Комбинат çуркуннехи шывшур вăхăтĕнче ĕçлеме пĕр уйăхлăх чĕр-тавар тата вутă запасĕ туса хунă.

Инвалидсен «Красный воин» артель коллективĕ (правлени председателĕ М. Корчагин юлташ) мартăн 20-мĕшĕ тĕлне пĕрремĕш квартал планне пĕтĕм продукци енĕпе 137 процент, куллен кирлĕ таварсем кăларас енĕпе 123 процент тултарнă. Март уйăхĕнче уйрăмах çĕвĕ çĕлекен цех, парикмахерски тата прачечнăй лайăх ĕçлерĕç. Парикмахерски мартăн 20-мĕшĕ тĕлне плана 115 процент тултарчĕ. Алжиковпа Хайтман парикмахерсем кулленех ĕç нормине 250—260 процент тултараççĕ. Куранник юлташ та икĕ çыншăн ĕçлет. Прачка Косемчук юлташ нормăна 200 процент тултарать. Çĕвĕçсем—Чернова 360 процент, Петухова 300 процент, Игнатьева 224 процент, Соснина 210 процент, трикотажница Ларионова 220 процент, закройщиксем — Фомин 350 процент, Чепыркина 280 процент тултараççĕ.

«Авангард» артельре ĕçлекенсем те пĕрремĕш квартал планне 102 процент, промкомбинат коллективĕ —111 процент пурнăçларĕç.

Г. Михайлов.

Хĕрарăмсем—вăрман хатĕрлевĕнче

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Механизациленĕ вăрман пунктĕнче ĕçлекенсем хушшинче хĕрарăмсем сахал мар. Вĕсем рядовой работницăсем пулса çеç мар, мастерсемпе десятниксем пулса та ĕçлеççĕ. Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсенчен чылайĕшĕсем хăйсен кулленхи ĕç нормисене ирттерсе тултараççĕ.

Питушкинари «Вперед» колхоз членĕсем Домна Улевăпа Елизавета Ваструшкина вăрман хатĕрлевĕнче чылайранпа ĕçлеççĕ. Нормăпа вĕсен кашни кун 2,5 кубометр вутă касса хатĕрлемелле, вĕсем 3—4 кубометр касса хатĕрлеççĕ.

«14 лет Октября» колхозăн членĕ Федосия Мажуркова юлашки вăхăтра лучковăй пăчкăпа ĕçлеме пуçларĕ. Вăл кашни кунах 3,5 кубометр вутă хатĕрлесе, нормăна 140 процент тултарать.

Сĕлте асăннă хĕрарăмсем тухăçлăн ĕçлени чăн малтанах вĕсем ĕç техникине, унăн технологи процесне тĕплĕн вĕренсе çитнинчен тата ĕç кунĕпе туллин усă курнинчен килет.

Возчиксем хушшинче те стахановла ĕçлекенсем сахал мар. Мария Савкова март уйăхĕнче нормăна вăтамран илсен, 150 процент тултарса пынă. Ку вăл ĕç тухăçлăхне февраль уйăхĕнчинчен 10 процент ÿстерни пулать. Савкова юлташ çак уйăхра ĕç тухăçлăхне 60 процентран кая мар ÿстерме тăрăшать.

Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕн дирекцийĕ хĕрарăмсене вăрман хатĕрлевне тата ытларах явăçтарма, вĕсене тухăçлăн ĕçлеме кирлĕ условисем туса пама тăрăшать. Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Коммунистла Кунĕ ячĕпе 47 хĕрарăмăн ĕçне вăл тĕрлĕрен парнесем парса паллă турĕ.

Вăрман хатĕрлевĕн хăвăртлăхне ÿстермелле

КАНАШ. (**Хамăр корр.**). Сиккассинчи вăрман пункчĕ (начальникĕ Козин юлташ) вăрман хатĕрлевĕн планне тултарассишĕн çине тăрса кĕрешет.

Фронтри пек ĕçлемелли икэрнелĕхре Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Трактор», «Новая деревня», Канаш районĕнчи Калинин тата Доронин ячĕсемпе тăракан колхозсем вăрман хатĕрлевĕн планне ирттерсе тултарчĕç. Смирнов юлташăн бригади вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе нормăна кулленех 130—180 процент тултарса пычĕ.

Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕ Петр Сергеев—вăрман турттаракан паллă стахановецсенчен пĕри. Ăна СССР Верховный Совет Президиумĕ вăрман ĕçĕнче стахановла ĕçленĕшĕн «За трудовое отличие» медаль парса наградăланă. Вăл кулленхи нормăна тăтăшах 150—200 процент тултарса пырать.

Вăрман хатĕрлевĕнче Канаш районĕнчи «Искра», «Броневик», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем юлса пыраççĕ.

«Броневик» колхоз плана хатĕрлес енĕпе 5 процент, турттарас енĕпе 8 процент çеç тултарнă.

В. Веселов.

Самолетсен эскадрильине тума

КАЛИНИНО. Ассакассинчи тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем çулпуç приказне ĕçпе ответлесе, самолетсен «Физкультурник Чувашии» ятлă эскадрильине тунă çĕре пурте укçа-тенкĕ пама пулчĕç.

А. Аникина, В. Демешова, В. Пантелеймонов т. ыт. вĕренекенсем самолетсен эскадрильине тума 25—30-шар тенкĕ пачĕç. Вĕсен патриотла шухăш-кăмăлĕ ытти вĕренекенсене те хавхалантарчĕ. Паянхи куна самолетсен эскадрильине тума 1.000 тенкĕ ытла укçа пуçтарăнчĕ.

Начарланса çитнĕ лашасене хăвăрт мăнтăрлатмалли майсем

Умра йывăр ĕçре начарланса çитнĕ лаша тăрать. Мĕн пулнă-ха ăна? Чирлĕ-и вăл? Çук, ывăннă вăл. Пуринчен те ытларах мышцăсем тата железăсем ывăннă. Çавăн пек лашана хăвăрт тÿрлетме, унăн мышцисене тĕреклетсе вăй пама чи малтан железасене тÿрлетмелле, лайăхрах ĕçлемелли майсем туса памалла. Начарланса çитнĕ лаша сĕлле те усăллăн çиеймест. Мĕншĕн тесен çинĕ апата çĕртме унăн хырăмлăх сĕткенĕ çитмест. Вăл сĕткене железасем кирлĕ чухлĕ кăларайми пулнă. Çавăнпа та ывăннă лашана канăва тăратсан, малтанхи эрнере уйрăмăн пăхни кирлĕ. Сĕлле е тата апата хăйне халлĕн çителĕклĕ таран панипе çеç лашана хăвăрт тÿрлетсе вăй пама çук.

Чăваш республикинчи колхозсенче лашасене пăхакан опытлă конюхсем начарланса çитнĕ лашасене «теплуха» ятлă апат çитерсе хăвăрт юсаççĕ. Пăтратни пулать ĕнтĕ вăл. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозра çак апата çапла хатĕрлеççĕ. Вите çывăхĕнче çакса вырнаçтарнă пысăк хуранра кашни 12—13 лаша валли пĕрер пăт çĕрулми пĕçереççĕ. Паллах, çĕрулмине çуса пĕçереççĕ. Пĕçернĕ çĕрулмин шывне тăкаççĕ, ăна лашасене пама юрамасть, унта выльăхсене сиенлĕ япала — соланин пур. Пĕçернĕ çĕрулмие тÿсе лапчăтаççĕ те 3—4 витре шыв, 150—200 грамм тăвар ярса хутăштараççĕ, унтан 3—4 килограмм посыпка, 1—2 килограмм клевер арпи е туранă лайăх утă хурса татах тепĕр хут хутăштараççĕ те 80—90 градус таран ăшăтаççĕ. Çакăн хыççăн пĕçернĕ апата каткана ярса ăна татах 4—5 витре шывпа хутăштараççĕ, михĕпе витсе лĕп пуличчен сивĕтеççĕ. Начарланса çитнĕ лашасем çак апата питех те юратса çиеççĕ, ун хыççăн вара утăна та пысăк кăмălпа çиме тытăнаççĕ. Апата лайăх çиме пуçларĕ пулсан, вара лаша хăвăрт тÿрленет. Анчах утăна пĕчĕк порцисемпе талăкра лаша умне 4—5 хутчен хурса памалла тата порцисене те икĕ пая уйăрса çитермелле.

Вăрмар районĕнчи колхозсенче апата лайăхрах çитерес тĕлĕшпе лашасене сăкăр йĕпетсе параççĕ. Сăкăрне каяш тырă, мăян, пĕçерсе тÿнĕ çĕрулми, клевер арпи ярса пĕçереççĕ. Çавăн пекех начарланса кайнă лашан мышцисене тата ытти органĕсене хăвăрт тĕреклетме пĕрер килограмм кĕрпе тунă пăрça пани усăллă. Ăна лашана çуршар килограмм çеç парса çитермелле.

Витаминлă-минераллă апат вырăнне начар лашасене кун сиктерсе 5—7 кун хушши шÿтерсе салатланă 200 грамм ыраша авăртса, аласа илнĕ 15 грамм шăмă çăнăхĕпе хутăштарса пама хушаççĕ.

Кану вăхăчĕн ытти эрнисенче лашасен мышцисене тĕреклетсе çитерес задача тăрать. Çак вăхăтра шултăра апата умран татмасăр çитернисĕр пуçне тата 2,5—4-шер килограмм сĕлĕ парса тăрсан лаша талăкра 700—900 грамм хутшăнса пыма пултарать.

Сĕлле перекетлес тĕлĕшпе кашни лашана 6—8 килограмм çĕрулми пĕçерсе памалла. Салат пăттине майĕпен пама пуçласа талăкра 3 витре таран çитерме пулать, сĕлĕпе викăран, купăстаран, хĕвелçавăрнăшĕнчен тунă лайăх силос çитермелле. Силоса пĕчĕккĕн (пĕрер тата çуршар килограммăн) çитерме пуçласа кайран талăкра 6—8-шар килограмм таран пама юрать. Пĕгĕ кĕсресене силос пама юрамасть. Каяш тырăран мăянпа хутăш пĕçернĕ сăкăр çитерни концентратлă фуража нумай перекетлет.

Лашасем каннă вăхăтра шултăра апатпа тухăçлăрах усă курас пулать. Улăмпа пăтратни туса, утăна тăварлă шывпа йĕпетсе клевер çăнăхĕ е сĕлĕ сапса çитермелле. Лашасене талăкра виçĕ хут шăварас пулать. Çăлран мар, кÿрсе килсе витере ăшăннă шывпа шăвармалла. Начарланса кайнă лашасене кулленех тасатни вĕсен аппетитне уçать, юсанассине хăвăртлатать. Çавăн пекех талăкра 3—4 сехет хушши картишре уçăлтарса çÿрени усăллă.

Уйрăмăн тăрантарса тата лайăх пăхса лашасене пурне те çуракиччен мăнтăрлатса çитерер.

Доцент И. РЫЖОВ.

Кролик ĕрчетсе пысăк тупăш илнĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Хамăр корр.**). Фронтпа çĕршыва пулăшу парассишĕн тăрăшса, Йĕпремри «Чамыш» колхоз отечественнăй вăрçă пуçланнă хыççăн кролик ĕрчетме тытăнчĕ. Кроликсен ферминче малтан 10 кролик кăначчĕ. Халĕ фермăра 83 кролик ĕнтĕ.

1942 çулта 26 ама-кролик пурĕ 543 çăвăр тунă. Вăтам шутпа кашни кролик 500 грамм мамăк панă. Мамăкпа тата паха аш-какайпа кролик ферми колхоза çулталăк хушшинче 16.845 тенкĕлĕх тупăш панă.

Кроликсене колхозница Маренова юлташ пăхать. Вĕсем хăвăрт ĕрчени йăлтах ĕнтĕ Маренова юлташ лайăх ĕçленинчен килнĕ. Колхоз правленийĕ унăн ĕçне тивĕçлипе хаклать. Стахановла ĕçшĕн Маренова юлташа сысна çури парса премиленĕ. Райçĕрĕç пайĕ Маренова юлташа кролик ĕрчетес ĕçре паха çитĕнÿсем тунăшăн пысăк та ăшă шальтутăрĕ тата ăшă кĕпе парнеленĕ.

С. Шадин.

Ют çĕршывсенче

ТУНИСРИ ВАРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Марет районĕнче ĕнер артиллери вăйлăн персе тăнă. Дафсы районĕнче Америкăн пысăк мар чаçĕсем наступлениллĕ ăнăçлă çапăçусем туса пынă. Макнасси участокĕнче союзниксен войскисем пăртак малалла куçнă. Авиаци лайăх çапăçнă. Вăл тăшман войскисем çине, аэродромсем çине тата тăшманăн ытти объекчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 10 самолетне персе ÿкернĕ.

НИМĔÇ ХУЛИСЕМ ÇИНЕ СЫВЛĂШРАН БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ ÇИНЧЕН ГИТЛЕРЛА ХАÇАТСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Эссенпа Мюнхена сывлăшран пырса бомбăсем пăрахнине пула çав хуласенчи пурнăç йĕркерен тухса кайнине гитлерла хаçатсем хăйсемех йышăнаççĕ. «Националь цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, хулана вăйлăн аркатса пĕтернине пула влаçсем Эссенри халăхăн пĕр пайне кăнтăр Германие куçарма йышăннă. Хулари шкул çурчĕсене пурне те çынсене пурăнма куçарнă.

«Мюнхер Нейсте Нахрихтен» хаçат Мюнхена каяссинчен чарăнса тăма сĕнет, мĕншĕн тесен бомбăсем пăрахнине пула хулари коммунальнăй хуçалăха аркатса тăкнă.

СТОКГОЛЬМ, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен «Ангрифф» ятлă хаçачĕ çапла пĕлтерет: охраннăй отрядсене ертсе пыраканĕ тата Германи полицийĕн начальникĕ Гиммлер Германи хулисенче 23 сехет иртсен ниепле куçса çÿресси те пулмалла марри çинчен распоряжени кăларнă. Распоряжение халех пурнăçа кĕртмелле, тенĕ.

ИТАЛИРЕ ЧĔРТАВАРПА ТОПЛИВО ПИТĔ НУМАЙ ÇИТМЕСТ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Брюсселер цейтунг» ятлă гитлерла хаçатăн çапла йышăнма тивнĕ: Италире промышленность валли чĕртавар тата топливо тăратассинче «питĕ палăракан шăтăкшахăрсем пур». Италие çулталăкра сахалтан та 3 миллион тонна горючи кирлĕ пулсан, тесе çырать хаçат, çĕршывра ăна 72.000 тонна кăна хатĕрлеççĕ. 14 миллион тонна çĕр-кăмрăкĕ кирлĕ пулсан, вырăнта 5 миллион тонна кăна кăлараççĕ. Паха кăмрăк хисепне куçарса шутласан, вăл 3 миллион тоннăран ытла пулмасть. Синтетически каучук тăвас ĕçе пуçласа яман. Тимĕр çук.

Хаçат малалла çапла çырать: Итали промышленноçĕ пĕтĕмпех Германирен чĕртавар турттарса килнине пăхăнса тăрать. Германия чĕртавар тăратассине пĕтĕмпех Италия Германие ĕç вăйĕ мĕн чухлĕ янине кура «йĕркелет».

ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИНЧЕ ШВЕЦИ ПОЗИЦИЙĔ ÇИНЧЕН ЫЙТНИ

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче паян Швецире анса ларнă Германи самолечĕ çинчен, ун çинче 19 нимĕç салтакĕ пулни çинчен тата Швеци чикки урлă вĕçсе каçакан нимĕçсен транспортнăй çар самолечĕсем çинчен ыйтусем панă. Çак ыйтусем çине ответлесе, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ Лоу çапла каланă: Англин Стокгольмри посланникне çав фактсем çинчен пĕлме тата Швеци правительствинчен çав фактсем çинчен ăнлантарса пама ыйтма инструкци панă, тенĕ.

КИТАЙРА ХĔРАРĂМСЕНЕ ÇАРĂН ПУЛĂШАКАН ЧАÇĔСЕНЕ МОБИЛИЗАЦИЛЕНИ

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Чунцинра закон кăларнă. Вăл закон тăрăх, вăрçă вăхăтĕнче 18 çултан пуçласа 45 çула çитнĕ хĕрарăмсене çарăн пулăшакан чаçĕсене мобилизацилемелле.

ФРАНЦИРЕ ВАССАЛЛА ÇАР ТУМА ХАТЛАНАÇÇĔ

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра «Франци çарĕн хăшпĕр чаçĕсене тепĕр хут туса хурас ыйтăва тĕпчеççĕ». Çапла вара Лавальпе Петэн пулăшнипе гитлерла оккупациллĕ влаçсем Францире вассалла çар туса хума хăтланаççĕ. Вăл çар Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта куçаракан оккупациллĕ çарсем вырăнне Францире юлмалла пулать.

АМЕРИКА СЕНАЧĔ ЙЫШĂННĂ РЕШЕНИ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США сеначĕ нумай сасăпала личнăй окладсене çулталăкра 25 пин доллартан ытла мар илмелле пĕчĕклетесси пирки Рузвельтăн распоряженине пăрахăçа кăларакан (налогсем тытса юлнă хыççăн) законопроекта çирĕплетнĕ.

Çакăн пек решени нумаях пулмасть представительсен палати те йышăннă.

Личнăй окладсене пĕчĕклетесси çинчен панă Рузвельт распоряженийĕ вăрçă вăхăтĕнче экономикăна çирĕплетес тĕлĕшпе йышăннă программăн пĕр пайĕ пулнă.

КĔСКЕН

Францирен килнĕ пĕлтерÿсем тăрăх, хальхи вăхăтра нимĕçсем Францире çĕршыври мĕнпур сĕтĕн 80 процентне, эрехĕн 70 процентне, ытти апат-çимĕçĕн 60—70 процентне тытса илеççĕ. Аш тата пулă консервисен пĕтĕм продукцине нимĕçсем тытса илеççĕ.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

6. Ĕмĕт çунатланать

Кĕрхи кунсен, тăванăм,
Хăйсен илемĕ тулăх,
Хăйсен юрри-кĕввийĕ,
Хăйсен тивлечĕ пур.
Кăнтăралла ял урлă,
Кикаклатса салхуллăн,
Ачалăх иртнĕ евĕр,
Иртет ав кайăк-хур.

Кайăк-хура ыр сунннăн
Ав Омашне вăрманĕ
Варкăштарать сар тутăр —
Тăкать сар çулçине.
Çак ир вара Хветутăн
Ачалăхĕ ăсаннă,
Хăюллă яшлăх кĕнĕ
Ун усă чĕрине.

Пĕрре çуралнă ĕмĕт
Паман пĕрре те канăç.
Вăл ăмăрткайăк майлă
Çÿренĕ тÿпере.
Военкомат каланă:
— Ĕмĕтленни — аван ĕç.
Сывлăш флотне сăмахсăр
Илме пулать сире. —

Çав самантрах Орловăн
Икĕ çунат — ик çулăм
Хăватлăн ÿссе ларнă
Ик хулпуççи çинче.
Киле вăл, çулсăр-мĕнсĕр,
Вĕçтернĕ уйхир урлă;
Ана пăхса йăл кулнă
Кĕрхи кĕрен тĕнче.

Чарусăр шухă çил пек
Киле çитсе кĕрсессĕн.
Вăл амăшне çĕкленĕ
Тĕреклĕ аллипе.
— Анне, анне, аннеçĕм,
Анне, чухлатни эсĕ,
Эпир часах вĕçетпĕр
Чăн ăмăрткайăк пек.

Анчах мăнтарнă амăшĕ
Пĕр савăннă, хурланнă
Тем çуннă ун, вăркăнă
Яланхи пек шалтан.
Салтак валли вăрахăн
Вăл кутамка пуçтарнă,
Тирпейлĕн хатĕрленĕ
Сухарипе шăрттан.

Ун ывăлĕ çын пулчĕ —
Ку питĕ пысăк савнăç,
Анчах паян сасартăк
Ăсатмалла инçе.
Юлташĕсем пуçтарăнчĕç,
Ыталанса юрларĕç
Çÿлти çут çăлтăр витĕр
Çул курăнни çинчен.

Хисеплĕ председатель
Часах ак кÿлсе килчĕ
Колхозăн çил-çунатлă,
Кăвар пек айăрне.
— Сывпул, тăван Ямашăм! —
Кĕрхи чарусăр çил çеç
Кервен урапа хыççăн
Хир тăрăх вирхĕнет.

— Сывпул, тăван уйхирĕм!
Сывпул тăван ял-йышăм!
Сывпулăр та пур пулăр,
Хĕрсем те каччăсем!
Сывпул, Якур мучиçĕм,
Мухтав сана иртнишĕн,
Çухалмĕç нихăçан та
Эс чĕртнĕ юмахсем.

Юртать тур ут çул тăрăх,
Ун капăр çилхи витĕр
Çĕр çитмĕл çичĕ саслă
Хаваслă çил вĕрет.
Хĕрсем сулаççĕ тутăр:
— Сывпулăр, лайăх çитĕр,
Анчах таçта çитсен те
Ан манăрсам пире!

Сана ăсатма тухнăн,
Вĕçĕ-хĕррисĕр, шутсăр
Çул хĕрринче тăраççĕ
Колхоз çĕмелĕсем.
Ав Омашне вăрманĕ
Варкăштарать сар тутăр,
Пуçне таять мăнаçлăн
Тур ăйăр юртнăçем.

Сывпул, тăван çĕршывăм,
Сывпул, тăван кĕтесĕм!
Юртсам, ут, васкаварлăн
Çитес çĕре çитсем!
Ентĕ, тăван çĕршывăм,
Сан ывăлна кĕтеççĕ
Чи аслă та чи паттăр
Ĕçсем те ĕмĕтсем.

Хăюллисем — вĕçеççĕ,
Хăравçисем — ÿкеççĕ,
Чăн малтанхи урок ку,
Чăн малтанхи сăмах
Тĕпче хăвна, тăванăм,
Пулас тесен вĕçевçĕ,
Хăюллисен йышне эс
Кĕрес тесен чăнах.

Кам нăрă пек аранăн
Йăраланма çуралнă,
Аншăртлансах ăмсантăр —
Вĕçме пултараймасть.
Орлов çакна вуланă.
Орлов çакна ăнланнă.
Вăл туйнă — ун чĕрийĕ
Вĕçме кăна хавас.

Юмахпала çуралнă
Хăватлă ăмăрткайăк
Ун чĕринчех çÿренĕ,
Вăл пулнă хăй — чĕре.
Чĕре чĕр саслăн чĕннĕ:
— Сана эп илсе кайăп
Чи çÿллĕ кайăкран та,
Тăванăм, çÿлерех.

Анчах малтан Орловăн
Чи тимлĕ шкул ачи пек
Ларсах вĕренме лекнĕ
Вĕçев теорине.
Райтсем — кайăк пулсассăн,
Икар — вăл пулнă чĕпĕ, —
Çапла пин çул этемлĕх
Вĕçмешкĕн вĕренет.

Пин-пин çул ĕмĕтленнĕ,
Çуратнă пин легенда,
Икар хăй те çÿренĕ
Легендăра кăна.
«...Халь эс вĕçен, çапах та
Пĕр штопăра лекен те
Тухса хăтăлаймасăр
Пуç-хĕрлĕ вăркăнан».

Çапла çырать Орловăн
Пĕрле ларан юлташĕ
Хăй умĕнчи сар питлĕ
Таса тетрадь çине.
«Штопор тени вăл тĕрлĕ, —
Мĕнли çинчен каласшăн? —
Пĕр тĕрлипе уçаççĕ
Эрех кĕленчине».

Çапла Орлов та çырчĕ,
Кулмасăр çырчĕ, çирĕп,
Хăйĕн чăвашларах та
Ытарлă ответне.
Çапла кунсем иртеççĕ.
Герой ман кунĕн-çĕрĕн
Васкать канма пĕлмесĕр
Çитме хăй ĕмĕтне.

Часах, часах вăл акă
«У-2» çине те ларчĕ,
Инструкторпа пулсан та
Çапах вăл сывлăшра
Мухтав, этем ăстанĕ!
Мухтав, этем хăвачĕ! —
Иртни те аса килчĕ.
Ăна сак хушăра:

Ытла та мĕскĕн пулнă,
Никам пĕлмен кĕтÿçĕ;
Куççулĕ витĕр пăхнă
Çÿлти хăлат çине.
Çĕршыв ăна çĕклерĕ,
Халь акă çул яр-уçă,
Халь тÿперен сăнать вăл
Мĕнпур çут тĕнчене.

Часах Орлов хăй тĕллĕн
Вĕçме пуçларĕ лайăх,
«У-2» кăна пулсан та
Çунатлă вăл çапах.
Çапла çунатне сарчĕ.
Пĕр çамрăк ăмăрткайăк,
Çапла çÿре пуçларĕ
Ĕмĕтленен çулпа.

Ун чух çĕршывăм хăй те
Тинреххĕн çунат сарнă
Çитĕнекен хăвачĕ
Хăпарнă кĕрлесе.
Челюскинçăсен чапĕ
Тĕнчипеле янранă,
Тĕнче умне çĕкленнĕ
Пĕрремĕш геройсем.

Унтан Валерий Чкалов,
Пĕрремĕш çиçĕм евĕр,
Тĕтре касса çул хыврĕ
Çулпуç маршручĕпе.
Унтан шур полюс урлă
Америка вĕçетпĕр,
Полюсалла кĕретпĕр
Чи аслă хуçа пек.

Хăюллă вĕçевсен тапхăрĕ —
Мухтавлă, чаплă тапхăр
Кашни ун чух çÿренĕ
Хăй майăн çунатпа.
Пĕр-пĕр сăвăр пек лăпкă
Вăрмантрестри бухгалтер
Вышка çинчен чăмтарнă
Сенкер парашютпа.

Кашни йĕкĕт тĕлленнĕ
Пулмашкăн истребитель,
Яш-кĕрĕмре çÿренĕ
«Хурчка» сăмах кăна.
— Хурчка, — тенĕ Орлов та, —
Хурчка аван вăл пит те. —
Анчах та урăххийĕ
Канăç паман ăна.

Хурчка аван вăл питĕ.
Çапах та ăмăрткайăк
Мĕн пĕчĕкрен çуралнă
Орловăн чĕринче.
Начальнике калать вăл:
— Бомбовозпа эп кайăп.
Унпа епле пулсан та
Вĕçме пулать инçе.

(Малалли пулать.)

Малалли. Поэма 61-мĕш номĕртен пичетленме пуçланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 665 Типография № 1, Управлени полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.